26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАЙ 5 ЮНКУН 94(6331) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ПИЧЕТ КУНĔ

Вăтăр пĕр çул ĕлĕкрех, 1912 çулхи майăн 5-мĕшĕнче, большевикла «Правда» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухнă. Çак куна совет халăхĕ кашни çулах паллă туса ирттерет, хăйĕн большевикла пичечĕн ĕçне пăхса тухса, унăн малашнехи задачисене палăртать.

Кăçал эпир пичет кунне совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пынă условисенче паллă тăватпăр. Вăрçă вăхăтĕнче большевикла пичетĕн вырăнĕ калама çук ӳсрĕ. Пичет—«пирĕн партин чи çивчĕ те чи вăйлă хĕçпăшалĕ» (Сталин). Халĕ вăл кĕрешӳри питех те вăйлă, тăшманшăн хăрушă хĕçпăшал пулса тăрать. Вăл халăха ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçăн задачисене ăнлантарса парать. Пирĕн халăхăн фронтри тата тылри патриотла çĕкленĕвне организацилесе, аталантарса пырать. Большевикла пичет пирĕн фронтпа тыла çыхăнтарса тăрать, большевикла пичет сăмахĕ фронт линийĕ урлă каçса, пирĕн тăвансене партизанла кĕрешĕве çĕклет.

Пирĕн пичет умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Социализмлă тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăннă ирсĕр захватчиксене хирĕç кĕрешме пирĕн пичет совет халăхĕн хаяр курайманлăхне çĕклесе пымалла, тăшмана хирĕç кĕрешме мĕнпур ĕççыннисене хавхалантарса пымалла, вĕсене фронта активлăн пулăшма мобилизацилемелле. «...Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă Хĕрлĕ Çара орудисем, танксем, самолетсем, пулеметсем, автоматсем, минометсем, боеприпассем, снаряжени, апат-çимĕç татах та ытларах парса тăма хушать. Апла пулсан, рабочисем, колхозниксем, пĕтĕм совет интеллигенцийĕ фронт валли икĕ хут нумайрах вăй хурса ĕçлени кирлĕ», терĕ Сталин юлташ кăçалхи майăн 1-мĕшĕнче кăларнă хăйĕн приказĕнче.

Умра тăракан пысăк та ответлă задачăсене пирĕн большевикла пичет ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Республикăра тухса тăракан вуншар райхаçатсемпе пиншер стена хаçачĕсем хăйсен ĕçне юлашки вăхăтра чылай лайăхлатрĕç. Пичет ĕçне вăрçă кунĕсенче хутшăннă çамрăк работниксем хăйсен пĕлĕвĕсемпе пултарулăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ.

Вăрçă кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртме ĕççыннисене мобилизацилес ĕçе уйрăмах Тăвай, Калинино тата ытти районсенчи хаçатсем лайăх туса пынине палăртмалла. Тăвай тата Калинино районĕсенчи хаçатсен редакторĕсем Каховскипе, Воробьев юлташсем Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕç. Кунпа пĕрлех лайăх ĕçлекен стена хаçачĕсене те нумай илсе кăтартма пулать. Тăвай районĕнчи «Сталь» колхозра «Çамрăк вăй» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Хаçат редакторĕ Банков юлташ редакци активĕпе тăтăшах ĕçлет. Çураки вăхăтĕнче кăна ку стена хаçачĕ 18 номер тухнă, колхоза районри малти вырăна йышăнма пулăшнă. Çакăн пек хаçатсен хисепĕ пысăк.

Çакăнпа пĕрлех пирĕн чылай хаçатсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Вĕсем корреспондентсемпе çителĕксĕр ĕçленĕ пирки, район е колхоз пурнăçне туллин çутатса пыраймаççĕ. Юлашки вăхăтра районри хаçатсенче критика вăйсăрланчĕ, партипе комсомол пурнăçĕ çинчен хăшпĕр хаçатсем çителĕксĕр çыраççĕ, фронтпа тыл çыхăнăвĕ çинчен калакан материалсем сахалтарах пичетленме пуçларĕç. Çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, умра тăраакн задачăсене вăрçă хушнă пек пурнăçа кĕртсе пырасси — пичет работникĕсен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать.

Пирĕн парти большевикла пичете яланах пысăк вырăна хурса хакланă. Çавăнпа та пирĕн пичет массăсем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать, парти организацисене пысăк пулăшу парать. Çак пулăшу вăйланнăçемĕн вăйланса пытăр, тесен, парти райкомĕсемпе пуçламĕш организацисен вырăнти пичете куллен ертсе, пулăшса пырас пулать. Пичет работникĕсене вĕрентсе ӳстерес, корреспондентсен йышне ӳстерес, хаçатсемпе масса хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле.

Совет пичечĕ тĕрĕслĕхшĕн кĕрешет. Пĕтĕм совет халăхĕ пекех, вăл тăшмана аркатса тăкас шухăш-кăмăлпа пурăнать. Большевикла пичетĕн çĕнтерӳ патне чĕнекен тĕрĕс сăмахĕ татах та хытăрах янрĕ, вăл ĕççыннисене фронтшăн ĕçлеме татах та вăйлăнрах мобилизацилĕ, Ленин—Сталин ялавне çӳлте тытса пырĕ!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 3-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 2-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтернĕ, чугунçул эшелонне ӳпĕнтерсе янă тата тăшманăн хуралра çӳрекен карапне путарнă.

* * *

Кубань çинчи пĕр участокра пĕр соединенин чаçĕсем хастарлăн кĕрешнĕ. Нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, 4 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 9 дзотне тата 7 блиндажне аркатнă, тăшман артиллерийĕн 2 батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем, малтанхи позицисене йышăнса тăрса, разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерирен пенĕ. Пирĕн артиллери нимĕç пехотин пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă, 8 пулемета çĕмĕрнĕ, тăшман артиллерийĕн 4 батарейине пусарнă.

* * *

Севск районĕнче Фролов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенин разведчикĕсем сасартăк тăшмана тапăннă. Нимĕç траншейисене кĕрсе кайса, красноармеецсем унта пулнă гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Пулемет тата вилнисен винтовкисене илсе, разведчиксем пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

Пĕр чаçăн снайперĕсем кун каçиччен нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллерирен тата минометсенчен персе 8 дзота тата 7 землянкăна аркатнă, артиллерин 2 батарейине пусарнă тата боеприпассен складне сирпĕнтернĕ. Снайперсем 100 ытла гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Чернигов облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç карателĕсен атакине сирсе пăрахнă. Хăйсен умĕнче гитлеровецсем мирлĕ халăха — хĕрарăмсемпе ачасене хăваласа пынă.

Партизансем тăшмана хупăрласа илнĕ те пăшалсемпе пулеметсенчен вирлĕн пеме пуçланă. Вăйлăн пырса çапнине тӳсеймесĕр, нимĕçсен каяллла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 57 вилли вырта юлнă. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 197-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Эдуард Гайдаковский, поляк çынни, çапла калаçа панă: «Манăн аттен пысăк та килĕштерсе пурăнакан çемье пурччĕ. Нимĕçсем ăна пĕтерсе тăкрĕç. Вĕсем пирĕн пĕтĕм пурлăха тытса илчĕç, аттене—74 çулхи старике — нимĕç помещикĕ патĕнче батрак туса хучĕç. Манăн пичче Владислав пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ Германире концлагерьте асапланать. Икĕ шăллăм — Иозеф тата Вячеслав—Германире тыткăнра асапланаççĕ. Тепĕр шăллăма—Каземира—нимĕçсем 1939 çулта илсе кайрĕç те, ун çинчен халь пĕр сас-хура та çук. Тепĕр шăллăма—Сигизмунда—нимĕçсем ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме Данцига хăваласа кайрĕç. Улттăмĕш шăллăм — Тадеуш, 20 çула çитнĕскер, Ораниенбургри концентраци лагерĕнче вилнĕ. Çав лагерьтех манăн йысна Ян Шмидт та вилнĕ. Пирĕн çемьене тивнĕ пек хăрушă кунçул гитлерла çынвĕлеренсем таптаса пусмăрланă хальхи Польшăра нумайĕшне тивнĕ. Мана тата манăн тăвансене çав тери пысăк хуйхă кăтартсан, нимĕçсем мана та армие илчĕç. Вĕсем пире, поляксене, Германипе Гитлершăн юн тăктарттарасшăн. Этемрен çакăнтан ытла мăшкăлланине шухăшласа кăларма та хĕн. Май килсенех эпĕ вырăссен енне куçрăм. Çапла майпа эпĕ хама ирĕклĕх тупрăм, çав тери курайми нимĕç мундирне хывса пĕтĕм».

* * *

Совет çĕршывĕн пур кĕтессинчен те Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн приказĕ çине ответлени çинчен пĕлтерӳсем килеççĕ. Хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем пĕр сасăпа çапла калаççĕ: «Эпир пурте хастарлăн ĕçлеме пулатпăр, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах аркатса тăкма фронта мĕн кирлине пĕтĕмпех пама пулатпăр», теççĕ.

Предприятисенчи рабочисем тата инженерсемпе техниксем самолетсем, танксем, орудисем, пулеметсем, боеприпассем тата Хĕрлĕ Çара кирлĕ ытти хатĕрсене ытларах туса кăларма хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ. Ялсенче те митингсемпе пухусем вăйлăн çĕкленсе иртеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çураки ĕçне хăвăрт ирттерме тата Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва апат-çимĕç ытларах туса пама пулса обязательствăсем илеççĕ. Куйбышев облаçĕнчи «Коммунист» ялхуçалăх артелĕн митингĕнче бригадир Фролов юратнă çулпуç чĕнни çине ответлесе çуракине вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса ирттерме сĕннĕ. Çак сĕнĕве пурте хавасланса йышăннă. Майăн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче колхозниксем уйра хăйсен нормисене ирттерсе тултарнă. Вĕсем ир акмалли тĕштырăсене срокчен виçĕ кун малтан акса пĕтернĕ. Колхоз планран ирттерсе 11 гектар пăрçапа сĕлĕ оборона фончĕ валли акса хăварнă. Дагестан аулĕсенче ĕçхалăхĕн йышлă пухăвĕсем пулса иртнĕ. Леваши аулĕнче 2.000 горец пухăннă. Вĕсем фронта пулăшма тупа тунă. Çӳллĕ сăрт çинчи Тасут аул çынни—80 çулхи Даудт Махмудов çапла каланă: «Манăн 4 ывăл тата ывăлсен 19 ывăлĕ фашистсемпе çапăçаççĕ. Хам эп колхоз кĕтĕвне пăхатăп. Майăн 1-мĕшĕнче тухнă приказра Сталин юлташ совет халăхне фронта пулăшма чĕнчĕ. Кашни 100 сурăх пуçне 120 путек ӳстерме сăмах паратăп», тенĕ.

Совет железнодорожникĕсем, Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, сехет механизмĕ пек лайăх ĕçлеме пулнă. Ярославль чугунçулĕн Мускав отделенийĕнчи железнодорожниксен митингĕнче главнăй кондуктор Ливанов çапла каланă: «Совет транспортникĕсен çарĕ Сталин кăтартса панисене пурнăçлассине хăйĕн çар чысĕ тесе шутлать. Хамăр вăй-хала ик-виçĕ хут ӳстерсе, паттăр Хĕрлĕ Çара нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатса тăкма пулăшар, тесе Верховный Главнокомандующине тупа тăвар». Железнодорожниксем вагонсем ахаль тăрассине чакарма, поездсене хăвăртрах çӳретме хăйсем çине tatăклă обязательствăсем илнĕ.

Майăн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пĕр чаçăн боецĕсем, нимĕç пехотин атакине сирсе пăрахса, 100 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем тăшман аэродромне тапăннă. Бомбăсем пăрахса нимĕçсен 4 самолетне аркатса тăкнă, 8 самолетне çунтарса янă. Аэродром тĕлĕнче пулнă сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче старши лейтенант Соколов командир пулса ертсе пыракан разведчиксем нимĕç позицийĕсене атакăланă. Штык вĕççĕн пынă çапăçусенче пирĕн боецсем 30 гитлеровеца вĕлернĕ, станковăй пулемет, миномет, 20 винтовка тытса илнĕ, вара хăйсен подразделенине таврăннă. Тепĕр участокра нимĕçсен 7 бомбардировщикĕ пĕр часть çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Лейтенант Мохарт командир пулса ертсе пыракан зенитнăй пулеметсен взвочĕ нимĕçсен пĕр самолетне персе ӳкернĕ. Тăшманăн тепĕр бомбардировщикне Рычев юлташ ертсе пыракан батарейăн зенитчикĕсем персе ӳкернĕ.

Пĕр соединенин снайперĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 164 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севск районĕнче пĕр чаçăн разведка тăвакан группи шыв рубежĕ урлă каçнă та тăшмана сасартăк атакăланă. Пирĕн разведчиксем тăшманăн 5 дзотри гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă, унтан, тыткăна илсе, хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 10 дзотне тата минометсен 3 батарейине аркатса тăкнă, нимĕç салтакĕсем ларса пыракан икĕ лодкăна путарнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ апрелĕн 23-мĕшĕнче нимĕç гарнизонне пырса тапăнса 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр отрядри партизансем апрелĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 23-мĕшне çитиччен тăшманăн икĕ эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз, боеприпассем тиенĕ 20 вагон тата тĕрлĕ çар хатĕрĕ тиенĕ 16 вагон арканса кайнă.

* * *

Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн приказĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флотĕнчи çынсене патриотла вăйлăн хавхалантарнă. Отечественнăй вăрçăн пур фрончĕсенче те боецсем тата командирсемпе политработниксем Верховный Главнокомандующие хĕрӳллĕн саламласа çапла калаççĕ: «Татăклă çапăçусем патне эпир хăюллăн тата шанчăклăн пыратпăр. Хĕрлĕ Çар Сталин юлташ приказне чыслăн пурнăçа кĕртĕ», теççĕ.

Пĕр гвардейски чаçăн танкисчĕсен митингĕнче механик-водитель—гварди старшини Ушак юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Сталин юлташ пире çапăçу пĕлĕвне лайăхлатма приказ пачĕ. Эпир, танкистсем, гвардеецсем, хамăрăн мастерлăха пĕр чарăнмасăр ӳстерсе пырса, килес çапăçусенче Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче кĕрешсе илнĕ чыслăха татах ӳстерме пулатпăр», тенĕ. Старши лейтенант Телегин пĕр чаçăн митингĕнче çапла каланă: «Сталин приказĕ эпир çĕнтерессе шаннине тата ытларах ӳстерчĕ. Совет халăхĕпе унăн хĕçпăшаллă вăйĕсем пуласлăх çине шанчăклăн пăхса тăраççĕ. Союзниксен армийĕсемпе пĕрлешсе, Хĕрлĕ Çар фашистла тискере çĕмĕрсе тăкĕ», тенĕ. Пĕр чаçри боецсем старшина Доценко юлташăн хумханулла сăмахне пысăк тимлĕхпе итленĕ: «Тискер нимĕçсем манăн киле аркатса тăкрĕç, манăн хуçалăха пĕтерчĕç, ялйышсене нумайĕшне тискеррĕн асаплантарчĕç. Хамăр çынсен юнĕпе куççулĕшĕн фашистла ирсĕрсене пĕр шеллемесĕр тавăрма пире Сталин юлташ вĕрентет. Юратнă наркомăн приказне пурнăça кĕртес ĕçре хамăн вăя шеллемĕп, тесе тупа тăватăп», тенĕ Доценко. Красноармеец Мулажбеков, казах, хĕрӳллĕ сăмах тухса каланă: «Верховный Главнокомандующин приказне эпĕ çапла ăнланатăп, — тенĕ вăл: — кашни боец ытларах нимĕçе вĕлерсен, эпир хăвăртрах çĕнтерĕпĕр. Манăн аллăм чĕтремĕ, тесе эпĕ тăван халăха тата Сталин юлташа тупа тăватăп. Эпĕ пĕр хĕрхенмесĕр, ывăнма пĕлмесĕр фашистла сволочсене вĕлерсе пыма пулатăп». Пĕр чаçри летчиксен митингĕнче икĕ орденлă летчик—гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ Углянский юлташ сăмах тухса каланă: «Сталин юлташ приказĕ пире çĕнтерӳ çулне кăтартать. Эпĕ çĕнĕрен вăй-хал хутшăннине туятăп. Пулас çапăçусенче эпĕ тăшмана тата вăйлăрах çапма пулатăп. Сталин приказне чыслăн пурнăça кĕртессишĕн пĕтĕм вăя тата пĕтĕм пĕлĕве хума пур летчиксене те чĕнетĕп», тенĕ.

Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ валли—çакăн пек Сталин юлташăн приказĕ!

СТАЛИН ЮЛТАШĂН ПРИКАЗĔ ÇИНЕ ОТВЕТЛЕСĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр., телефонпа). «Партизан» колхоз членĕсем Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн приказне питĕ хавасланса кĕтсе илчĕç. Агитаторсем уйхире тухса сухаçăсемпе сӳреçĕсене вăл приказа тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Колхоз председателĕ коммунист И. Осипов паян вăл приказа 5-мĕшпе 6-мĕш бригадăри колхозниксене вуласа, ăнлантарса пачĕ. Çакăн хыççăн сухаçăсем хушшинчен 55 çулхи колхозник К. Семенов тухрĕ те çапла каларĕ:

— Эпĕ конюх. Анчах халь манăн лашасем уйра ĕçлеççĕ. Çавăнпа халĕ эпĕ те сухаçă. Вăхăта мĕншĕн ахаль ирттерес? Сталин юлташăн приказĕ фронт валли продовольстви ытларах туса пама хушать. Пирĕн çулпуç ыйтнине пурнăçа кĕртес пулать, терĕ.

Колхозниксем оборона фончĕ валли 8 гектар тĕштырă акса хăварма йышăнчĕç. Кунсăр пуçне, ирĕке кăларнă районсене пулăшма 2 ĕне, 3 сысна самăртма пулчĕç.

Колхоз тепĕр икĕ кунтан тĕштырăсене акса пĕтерет. Халĕ 100 гектар ытла акнă. Колхозниксем ĕç хăвăртлăхне ӳстерсех пыраççĕ. 1-мĕш бригадăри колхозницăсем М. Петрова, Е. Петрова, М. Павлова хăйсен нормисене 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ.

С. Шадин.

Сталин юлташăн приказĕ çĕнĕ вăйпа ĕçлеме хавхалантарать

ЧКАЛОВСКОЕ, майăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красный Октябрь», Нариман ячĕпе тăракан, «Канаш», «Осоавиахим» колхозсем çурхи тырăсене кĕске срокра акса пĕтерчĕç. Халĕ ку колхозсем пахча-çимĕç акма участоксем хатĕрлеме пуçларĕç. Ыран-паянах тата 10—12 колхоз çурхи тырăсене акса пĕтереççĕ.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказ пичетленнĕ хаçатсем колхозсене çитрĕç. Çулпуçăн чĕнӳллĕ уçă сăмахĕ колхозниксене çĕнĕ вăйпа ĕçлеме хавхалантарать. Колхозниксем тата тимлĕнрех ĕçлеме пуçларĕç, ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Паянхи куна пирĕн районри колхозсем пурĕ 6.357 гектар сухаланă, 5.692 гектар акнă. МТС тракторисчĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Тракторсемпе халĕ 966 гектар сухаланă.

Ахсянов,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Боецсем валли тăхăнмалли япаласем ытларах паратпăр

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне Шупашкарти чăлха фабрикинче малтан мĕнпур коллективпа пухăнса сӳтсе-яврăмăр. Халĕ çав историллĕ приказа цехсенче, бригадăсенче вĕренес ĕçе организациленĕ. Вĕренĕве агитаторсем ертсе пыраççĕ.

Приказа сӳтсе-явнă хыççăн чăлха фабрикин коллективĕ хăй çине татăклă обязательствăсем илчĕ. Рабочисемпе работницăсем производство планне 10 процент чухлĕ ирттерсе тултарма, çапла вара боецсем валли тăхăнмалли япаласем татах та ытларах туса пама, пĕрремĕш сортлă продукци туса кăларассине 80 процента çитерме, материалсене перекетлĕн расходлама пулчĕç.

Халиччен рабочисем пурте мар-ха ăмăртăва хутшăннă пулнă. Халĕ бригадăсем, рабочисем хушшинчи ăмăрту çĕнĕ вăйпа пуçланса каять. Рабочисем пурте ăмăртăва хутшăнаççĕ.

Фабрикăн подсобнăй хуçалăхĕнче те хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ. Рабочисемпе работницăсем подсобнăй хуçалăхăн çĕр лаптăкне пĕтĕмĕшпех лайăх пахалăхпа акса хăварма, хăйсене валли çулталăк пурăнмалăх пахча-çимĕçсем туса илме, çапла вара тăван çĕршывăн апат-çимĕç базине ытларах ӳстерме сăмах параççĕ.

Е. Богуславская,
Фабрика директорĕ.

Пир-авăр фабрикине пĕтĕм хăвачĕпе ĕçлеттерессишĕн

Шупашкарти пир-авăр фабрикинче аслă çулпуç Сталин юлташăн историллĕ приказне сӳтсе-явас майпа рабочисен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, фабрика руководителĕсем сăмахсем тухса каларĕç.

Ткачиха—стахановка Пирожкова юлташ хăйĕн митингри сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Эпир строительство тапхăрĕнче хамăр организованно та дисциплинăллă пулнине кăтартрăмăр. Фабрикăн пĕрремĕш черетне вăхăтра ĕçе яма ĕлкĕртĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ фабрикăна ĕçе ярсан, пирĕн татах та пултаруллăнрах ĕçлемелле. Тăван боецсем валли кĕпе-тумтир хатĕрлеме пир-авăр ытлăн-çитлĕн парса тăмалла. Çапла ĕçлеме чĕнет пире Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ.

Производствăри дисциплинăна татах та ытларах çирĕплетме кирли çинчен, ткачихăсем чăннипех те çулпуç чĕннĕ пек ĕçлессине шанса тăни çинчен фабрика директорĕ Наумова юлташ каларĕ.

К. Рыбакова,
Парторганизаци секретарĕ.

ПРИКАЗА ИТЛЕНĔ ХЫÇÇĂН

КАЛИНИНО, майăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказа вуланă хыççăнах митинга пухăнчĕç.

— Аслă полководецăн приказĕ пире çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем туса ĕçлеме хавхалантарать. Фронтпа çĕршыв валли кăçал эпир тата нумайрах тырпул ӳстерĕпĕр, хамăрăн мĕнпур вăя фронта активлăн пулăшнă çĕре парăпăр, — терĕ митингра колхозница Иванова юлташ.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз оборона фондне хывма кăçал çураки планĕнчен ирттерсе 12 гектар тырă акнă. Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, колхозниксем планран ирттерсе татах 10 гектар тырă акма пулчĕç.

Ф. Романов,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

БОЛЬШЕВИКЛА ПИЧЕТ ФРОНТРА ТАТА ТĂШМАН ТЫЛĔНЧЕ

Ӳкерчĕк çинче: (сулахайран сылтăмалла): 1. Малти позицире боевой листок çырса кăлараççĕ. 2. Партизансен пĕр отрячĕн типографийĕнче партизансен хаçачĕн черетлĕ номерне наборлаççĕ. 3. Канлĕ вăхăтра кавалеристсем «Правда» хаçатăн çĕнĕ номерне вулаççĕ.

В. МАЛЫШЕВ, П. ВЕРШИГОР ТАТА Л. ВЕЛИК[illegible] фотоӳкерчĕкĕ ([illegible] фотохроники).

Большевикла пичет—пирĕн партин чи çивĕч хĕçпăшалĕ

Çураки ĕçĕсене куллен ертсе пымалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи боевой приказĕ колхозниксемпе колхозницăсене çĕнĕрен хавхалантарчĕ. Аслă çулпуç халăха малашне те пысăк вăй пухса, Хĕрлĕ Çар воинĕсене пысăк пулăшу пама хушать. Çакна пурнăçа кĕртессишĕн куллен тимлĕн ĕçлеççĕ. Ял колхозникĕсем.

Акă, «Пятилетка» колхоз членĕ Федор Матвеев юлташ паян тырă акма уя ир-ирех тухнă. Ĕçлес килет, вăл пур таран хĕрÿллĕн ĕçлес килет. Шухăшĕсем фронта çыхăнаççĕ, унта пирĕн ывăлсем нимĕç захватчикĕсене çапăçса тăван çĕршыва ирĕке кăлараççĕ. Ирĕклĕхшĕн, халăхăн телейĕшĕн пыракан вăрçă ăнăçлă пулса пыры хăвăртрах пĕтерес тесен, мĕнпур халăхăн тимлĕн ĕçлемелле.

Анчах «Пятилетка» колхоз председателĕ Матвеев юлташ тата бригадир Федоров юлташ çакна тĕплĕн ăнланса çитереймеççĕ-ха. Никам та мар, вĕсем çураки ĕçĕсене кирлĕ пек ертсе пыманнипе пула уя ĕçлеме тухнă колхозниксем тăрăх ĕçлеме тăрăççĕ.

— Эпĕ паян пĕр гектар ытла пăрçа акма пултараттăм, темшĕн ĕçлеттерес çук-ха тăрăççĕ, вăрлăха уя халĕ те илсе тухмарĕç, пĕр ытла сехет кĕтетĕп ĕнтĕ, — тет пăрça акма ир-ирех тухнă Матвеев юлташ, ял енне тарăхса пăхса.

Вăрлăха уя вăхăтра илсе тухманнипе пулах акнă хăшпĕр çĕрсене хăварма пуçтарăнни колхозниксене те çĕрĕ тăрăççĕ, вĕсем уя 6 лашапа тухнă. Сахалтан та виçĕ сехет кĕтмелле пулчĕ вĕсен уя вăрлăх килес çитиччен.

Тепĕр участокра суха тăваççĕ. Касă хыçĕн касă çĕр çавăрнса юлать. Сухаçĕсем малалла утаççĕ. М. Алексеева колхозница кăçал малтанхи хут сухара. Вăл ĕçлекен плугăн тимрисене тĕрĕс лартман, вĕсем çĕре шăйăрса çеç пыраççĕ.

— Тÿрлететтĕм те çав, майне пĕлметтĕм, плугĕн уççи те çук, — тет вăл.

Пулăшакан та çук. Бригадир паян уя тухман-ха. Ĕçĕн пахалăхĕ япăх. Пĕр кун çеç мар, талкишĕпех кунта çĕре ăшăх сухалаççĕ. Колхоз председателĕ Матвеев юлташ çакăнпа килĕшсе ларать. — Юрать, 7—8 сантиметр тарăшĕн сухаласан та, — тет вăл. Колхозра ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслекен тăма çын уйăрман.

Çураки те — фронт. Уйхир ĕçĕсене фронта пекех ертсе пымалла.

Сменăра 8,3 гектар сухалать

ВАРНАР, майăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак тарана çитес çĕр нÿрĕ пулнă тапхăрта трактор бригадисем çураки ĕçне анлăн хутшăнма пултарармарĕ. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсемпе мĕнпур те 400 гектар çеç сухаланă. Енер тата паян МТС-ăн пур бригадисем те çураки ĕçĕсене тума анлăн тытăнчĕç. Тракторсем лайăх ĕçлеççĕ.

Сменăра пĕр чарăнмасăр ĕçлесе, З. Захаров тракторист «СТЗ» маркăллă тракторпа ĕнер 4,5 гектар сухаларĕ, тракторист К. Кондратьев юлташ «СТЗ-НАТИ» тракторпа сменăра 8,3 гектар сухаларĕ.

В. Петров,
МТС директорĕ.

Стена хаçачĕсене йĕркеллĕ кăларса тăрассишĕн

Вырăнти пичет вăл — коллективлă агитатор, коллективлă организатор пулма тивĕç. Чăвашсоюзра Данилов юлташ редактор пулса тăракан стена хаçачĕ çакна лайăх ăнланнă. Хаçат çырса тăракан çынсем йышлă, унăн пĕтĕмпе 29 корреспондент. Хаçата Чăвашсоюз коллективĕнчен Хĕрлĕ Çар ретне кайнă çынсем те çырса тăраççĕ. Вăл кирлĕ вăхăтра тухса тăрать, çав вăхăтрах вăл илемлĕ, содержанийĕ енĕпе те пуян. Данилов юлташ малтанах план туса хурать. Çав план тăрăх статья çырма авторсене явăçтарать.

Анчах стена хаçачĕсем пурте çакăн пек ĕçлемеççĕ-ха. Промсоюз, Швейпромсоюз, Госбанк коллективĕсен кăларакан стена хаçачĕсем вăхăтра тухмаççĕ. Вĕсем 1943 çулта ик-виçĕ номер çеç тухнă. Çав хаçатсем çине мĕнпур те тата çын çине кăна çырса тăрать. Хăшĕсен тата редколлеги членĕсем те çук.

Анчах, апла пулин те, вĕсен ĕçне йĕркелесе ярассишĕн унти пулăшмĕш партоорганизацисем те тăрăшмаççĕ.

М. Ильин.

* * *

КÿКЕÇ. «Победа» колхозри «Вăйлă тырпулшăн» стена хаçачĕ чăнахпех те коллективлă организатор пулса тăрать. Ана колхозниксем юратса вулаççĕ. Вăл вĕсене колхозри ĕçсене çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшать, ĕçе кая юлса пыракансене вăхăтра критиклесе тĕрĕс çул çине кăларать. «Вăйлă тырпулшăн» стена хаçачĕ 1943 çулта 5 номер тухнă. Унта çырса тăракансен йышĕ те кунран-куна ÿсse пырать.

Кадыков ячĕпе тăракан колхозри «Малалла» стена хаçачĕ хăйĕн ĕçне халь çеç чĕртсе ячĕ. Вăл 1943 çул пуçланнăранпа та икĕ номер çеç тухнă. Стена хаçачĕсен ĕçне вăйлатас енĕпе пирĕн чылай ĕçлемелле-ха.

А. Никитин,
«Ленин çулĕпе» райхаçат редакторĕ.

* * *

ТАВАЙ. Колхозсенчи стена хаçачĕсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. «Сталь» колхозри «Çамрăк вăй» стена хаçачĕ вăхăтĕнче кăна 18 номер тухнă. Стена хаçачĕ колхозниксене, колхозницăсене çураки ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерме мобилизацилет. «Сталь» колхоз çураки тăвас енĕпе районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Стена хаçачĕн редакторĕ Н. Банков юлташ корреспондентсемпе тата агитаторсемпе час-часах канашлусем туса ирттерет. Вĕсемпе стена хаçат ĕçне активлăн явăçтарать. Çавăн пекех «Смидович» колхозри стена хаçачĕ те лайăх ĕçлет. Вăл кăçал 26 номер тухнă.

А. Каховский,
Райхаçат редакторĕ.

Хаçат ĕçне лайăхлатма тăрăшатпăр

СЕНТЕР. Районри «Ĕç ялавĕ» хаçат юлашки çулсенче хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетрĕ. Редакци кашни уйăх валли ĕç планĕ тăвать, ăна ВКП(б) райкомĕ çирĕплетет. Хаçата çырса тăракан хисепĕ ÿсрĕ. Редакцине 1942 çулта 1043 çыру килнĕ. Çав çыру... 4 çулхи хаçата пичетле... Халь çулхи тăватă уйăхра... тăракансем 72 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен 25-шĕ колхозниксем, ыттисем — учительсем, агрономсем, районри работниксем. Кусемсĕр пуçне хаçат Хĕрлĕ Çар ретне кайнă 16 юлташпа яланах çыхăну тытать.

Хаçат — организатор, коллективлă агитатор пулмалла. Çак ĕçе ĕнтĕ вăхăтĕнче татах та лайăххăн туса пырас пулать. Партипе правительство решенийĕсене, Сталин юлташăн кăтартăвĕсене ĕçсыннисем патне вăхăтра çитермелле, Çак енĕпе «Ĕç ялавĕ» хаçат тăрăшса ĕçлет.

Районри хаçат, паллах, ВКП(б) райкомĕ пулăшмасăр хăй умĕнчи задачăсене çителĕклĕх пурнăçлама пултараймасть. Иртнĕ çулта ВКП(б) Сентер райкомĕ сахал пулăшатчĕ. Кăçал ĕç урăхланчĕ. ВКП(б) райкомĕ час-часах кăтартусем парать. Çакна пула хаçат ĕçĕ чылай лайăхланчĕ.

А. Соловьев,
Райхаçат редакторĕ.

ПИСАТЕЛЬ-ФРОНТОВИК

Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн 4 кун хушши çапăçу пынă. Анăçлă рубежра çирĕпленсе ларнă фашистсем пире хирĕç хаяррăн çапăçнă, тĕрлĕ хĕçпăшалпа пирĕн çинелле персе тăнă, çÿлтен бомбăсем тăкнă, анчах çавах та совет воинĕсен наступленийĕ хастарлăхне хавшатайман. Пирĕн боецсем çине тăрса кĕрешнипе метр хыççăн метр йышăнса малалла куçнă, пиллĕкмĕш талăкĕнче ирхине тăшмана тĕреклетнĕ вырăнтан хĕссе кăларнă. Нимĕçсен çав тĕреклетнĕ пунктне чи малтан пырса кĕрекенсем хушшинче кĕçĕн лейтенант Леонид Агаков командир пулса ертсе пыракан подразделени те пулнă.

Çакăн хыççăн часах, Агаков чăваш писателĕ пулнине, литература ĕçĕнче ăста çын пулнине пĕлсе, ăна дивизи хаçачĕн редакцине ĕçлеме куçарчĕç. Агаков юлташ ку ĕçре те хăюллă та пултаруллă çар журналисчĕ пулнине кăтартрĕ. Пĕрмаях малти линире пулса, вăл чи çĕнĕ материалсем пухать, статьясем, очерксем, заметкăсем çырать. Кĕске вăхăтрах вăл боецсемпе командирсем тата политработниксем хушшинче авторитетлă çын пулса тăчĕ.

Агаков юлташа чаçăн историне çырма хушаççĕ. Пĕр чарăнмасăр материалсем пухса, вăл чылай пысăк ятпала çырчĕ.

Агаков юлташ питĕ ĕçчен, вăл пуçăннă ĕçе туса пĕтермесĕр нихăçан та пăрахмасть. Тепле чăрмавсем пулсан та, хушнисене яланах вăхăтра тăвать. Вăл, малти линире окопран окопа, блиндажран блиндажа çÿресе, боецсемпе, командирсемпе калаçать, çĕрле редакцине таврăнсан, статьясем, очерксем çырать, окопри хаçатăн черетлĕ номерне хатĕрлет.

Çавăнпа пĕрлех вăл хăйĕн тăван литературине те манмасть. Пирĕн куç умĕнчех, çĕрĕ-çĕрĕпе ĕçлесе, Агаков юлташ калавсен икĕ сборникне хатĕрлерĕ. Вĕсенчен пĕр сборникĕ — ача-пăча валли.

Хăйĕн произведенийĕсене вăл чăваш боецĕсене вуласа парать, вĕсем сĕннĕ тăрăх тÿрлетÿсем тăвать, хăйĕн калавĕсене татах та лайăхрах туса çитерме тăрăшать.

Агаков юлташ массăллă-политикăллă ĕçе те хастарлăн хутшăнать. Вăл военкорсемпе канашлусем ирттерет, çырма тин çеç пуçлакан фронтри писательсемпе, поэтсемпе калаçать. Вăл хăйĕн землякĕсемпе— чăваш боецĕсемпе тата командирсемпе те çирĕп çыхăну тытать, вĕсем хушшинче тăван чĕлхепе калаçусем ирттерет.

Фронтра ăна лейтенант званине пачĕç, халĕ тата старши лейтенант званине пама тăратнă. Фронтрах вăл парти ретне кĕчĕ. Октябрьти социализмлă Аслă Революци кунĕ ячĕпе дивизири чи лайăх çынсене приказ тăрăх тав тунăччĕ. Тав тунисем хушшинче Агаков юлташ та пур.

Çапла ĕçлет, çапăçать чăваш халăхĕн паллă представителĕсенчен пĕри — хăюллă командир, паттăр журналист, писатель Леонид Агаков, тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ.

Майор И. Кирьянов,
«Совет патриочĕ» хаçат редакторĕ.
А. Фаюстов,
Старши лейтенант.

Сывăхри вăхатра тумалли калаçусемпе докладсен ТЕМИСЕМ

1. Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн приказĕ — Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн тăшмана аркатса тăкмалли ĕçĕсен боевой программи пулса тăрать.
2. Нимĕçсене хирĕç туса пыракан отечественнăй вăрçă — Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен вăрçи.
3. 1942—1943-мĕш çулхи хĕллехи кампани Хĕрлĕ Çарăн тапăнса пырас вăйĕ ÿснине кăтартрĕ.
4. Хĕвелтухăçпе Хĕвеланăçĕнчен пĕрле пырса çапни гитлерла çар машинине тĕпренех кисрентерчĕ.
5. Фашистсен лагерĕнчи кризис.
6. Гитлерла Германие тĕпренех аркатса тăкни тата гитлерла Германия пĕр сăмахсăр парăнни — Европăра мир тумалли çул.
7. Совет Союзĕнчи халăхсен тата Хĕрлĕ Çарăн хăйсен пĕтĕм вăйне тăшмана аркатса тăкма мобилизацилемелле.
8. Фронт валли икшер çыншăн ĕçлесси — рабочисен, колхозниксен, совет интеллигенцийĕн пирвайхи обязанноçĕ.
9. Пирĕн тылри мĕнпур çынсен тата мĕнпур учрежденисен лайăх сехет механизмĕ пек йĕркеллĕн, пĕр тикĕс ĕçлемелле.
10. Хĕллехи çапăçусен ăнăçлăхĕсене çирĕплетсе малалла ÿстерер, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç татăклăн кĕрешме хатĕрленер.
11. Совет çыннисен юнĕпе куççулĕшĕн нимĕç ирсĕрĕсене тавăру та вилĕм.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ.

Краснодартан хĕвеланăçнерехри сывлăшри çапăçусем

Майăн 2-мĕшĕпе 3-мĕшĕнче Краснодартан хĕвеланăçнерехре пирĕн сывлăшри вăйсем нимĕç авиацийĕпе хаяррăн çапăçса, тăшмана пысăк сиен кÿнĕ. Икĕ кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 54 самолетне персе ÿкернĕ. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 21 самолет пĕтнĕ.

Ют çĕршывсенче

Ют çĕршывсенче Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ пирки мĕн калаççĕ

Англия

«ВЕЛИКОБРИТАНИ, США ТАТА СССР ХУШШИНЧЕ БОЕВОЙ ТУСЛĂХ ПУРРИНЕ СТАЛИН ПРИКАЗĔ ТАТА ТЕПĔР ХУТ КĂТАРТСА ПАЧĔ»

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн И. Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çинчен çыракан Англи хаçачĕсенче Сталин союзниксен ăнăçлăхĕсем çинчен ăшшăн калани тата вăл приказра шанчăклăх курăнса тăнине палăртаççĕ.

Приказ пĕрлешÿллĕ нацисен пĕтĕмĕшле стратегийĕ тата политики ăнăçлă пулнине шанни ÿссе пынине палăртать, тесе çырать „Таймс" хаçат. Гитлеровецсем союзниксене хирĕçтерессишĕн пулнине Сталин йĕрĕнсе каланă пĕр сăмахпа тăрă шыв çине кăларчĕ. Сталин, тет хаçат, союзниксен фрончĕ пĕрлĕхлĕ пулни çинчен нимĕнле иккĕленÿ хăвармасăр çирĕплетсе пачĕ, вăл ĕнтĕ хальхи вăхăтра питĕ хаклă пулса тăрать. Пĕрне-пĕри шанса тăрассинче сăмахсем мар, ĕçсем çирĕп никĕс пулса тăнине Сталин приказĕ тепĕр хут кăтартса пачĕ.

„Манчестер Гардиан" хаçат çакна палăртать: майăн пĕрремĕшĕнчи хăйĕн приказĕнче Сталин Россия вăрçăра çĕнтерессине тата союзниксем ăна пулăшу парассине çирĕп шанса тăнине кăтартса пачĕ.

ЛОНДОН, майăн 3-мĕшĕ (ТАСС). Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ Англи радиокомментаторĕсен выступленийĕсенче паллă вырăн йышăнса тăрать. Британин радио саракан корпораци обозревателĕ çав приказ союзниксене хирĕçтерме тăрăшакан нимĕç пропаганди путланса ларнине палăртать. Сталин приказĕ, тет обозреватель, Великобритани, США тата СССР хушшинчи боевой туслăхăн çирĕплĕхне çĕнĕрен кăтартса пачĕ.

США

«СОЮЗНИКСЕН ÇАПĂÇУ ХИРĔНЧИ ПĔРЛĔХĔ ХАЛĔ НИХĂÇАНХИНЧЕН ТЕ ÇИРĔПРЕХ»

НЬЮ-ЙОРК, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн И. Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çинчен нумай çыраççĕ.

„Çапăçу хирĕнчи пĕрлĕх" ятлă умстатьяра „Нью-Йорк геральд трибюн" çапла çырать: майăн пĕрремĕшĕнчи хăйĕн приказĕнче Россия, Англия тата Пĕрлешÿллĕ Штатсем хушшине Германия савăл çапса кĕртме хăтланнине Сталин татăклă отпор пачĕ. Сталин сăмахĕнчен çакă паллă,—тенĕ умстатьяра;— агрессорсен çарне тĕпрен аркатса вĕсем пĕр сăмахсăр парăнни кăна Европăри ыйтусене пурне те татса памалли никĕс пулса тăрать. Европăра иккĕмĕш фронт пулассишĕн тăрăшни, тенĕ малалла статьяра, Англипе Америкăн Çурçĕр Африкăри кампанийĕн тата Германипе Итали çине сывлăшран пырса тапăннисен ÿссине курма чарманнине Сталин кăтартса пачĕ. Союзниксен çапăçу хирĕнчи пĕрлĕхĕ халĕ нихăçанхи пек те мар çирĕпрех, тет хаçат.

СТАЛИН ЮЛТАШĂН ПРИКАЗĔ ПИРКИ ХЭЛЛ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ВАШИНГТОН, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ пирки США Государственный Секретарĕ Хэлл çапла каланă: вăл приказ— „аслă çулпуçăн хумхантаракан выступленийĕ, хальхи вăхăтра питĕ усăллă выступлени пулса тăрать", тенĕ.

Китай

«СОЮЗЛĂ ÇĔРШЫВСЕН ПĔРЛĔХĔ ÇИРĔПЛЕНЧĔ».

ЧУНЦИН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Китай хаçачĕсенче Сталин юлташăн приказне пичетлесе кăларнă тата уи пирки нумай çыраççĕ. „Чужуньянжибао" хаçат умстатьяра çапла çырать: çав приказра вăрçă ĕçĕсене хак пани пĕтĕм тĕнчене хăй çине çаврăнса пăхтарать. Сталин, тет хаçат, СССР, Англия тата США хушшинче пĕрлĕхлĕх пуррине лайăх кăтартса пачĕ.

„Союзлă çĕршывсен халăхĕсем,—çырать „Дагунбао" хаçат,—Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин приказне вуланипе çав тери савăнаççĕ. Сталин приказĕ пире союзлă çĕршывсен пĕрлĕхĕ çирĕпленни çинчен калать. Вăрçа пĕрлешсе туса пырас ĕç малалла пырать.

Турция

«ХĔРЛĔ ÇАР ТАТА СОЮЗНИКСЕМ НИМĔÇСЕН ÇАР МАШИНИНЕ ТАТĂКЛĂН ÇАПМА ХАТĔР»

СТАМБУЛ, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Турци хаçачĕсем Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне курăнмалли вырăнсенче пысăк заголовоксем парса пичетлеççĕ.

„Тан" хаçат çапла çырать: союзниксене пĕр-пĕринчен уйăрма хăтланакан нимĕç пропаганди ахалех путланнине Сталин приказĕ лайăх кăтартса пачĕ, тет.

Сталин халăха çĕнтерÿ тумашкăн пĕтĕм вăя хума чĕнчĕ тата Хĕвеланăçпе Хĕвелтухăçĕнчен юлашки 5—6 уйăх хушшинчи пек 2—3 хут вăйлăн пырса çапса гитлерла Германие катастрофа тÿстермелле, тесе каларĕ. Сталин калани Хĕрлĕ Çарпа союзниксем стратегиллĕ пĕтĕмĕшле план тăрăх нимĕç çар машинине татăклăн пырса çапма хатĕр пулнине пĕлтерет.

США-ри КĂМРĂК ПРОМЫШЛЕННОÇĔНЧЕ ТУХНĂ ХИРĔÇУ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри кăмрăк промышленноçĕнче рабочисемпе предпринимательсем хушшинче хирĕçÿ тухса кайнă. Горняксен пĕрлешÿллĕ профсоюзĕ предпринимательсем умне çакăн пек требовани лартнă: хаксем правительство кăтартса панинчен ÿссе кайнипе çĕнĕ килĕшÿре ĕçукçине хăпартмалла, пилĕк кунлă ĕç эрни вырăнне ултă кунлă ĕç эрни тумалла, тенĕ.

Горняксен пĕрлешÿллĕ профсоюзĕсен председателĕ Льюис правительство хирĕçÿсене татса пама хăй çине илес тенине йышăнман, ун пирки калаçасшăн пулман. Горняксемпе предпринимательсем хушшинче ку таранччен пулнă килĕшĕвĕн срокĕ тухсан, апрелĕн 30-мĕшĕнче 250 пин рабочие яхăн ĕçе пăрахнă. Забастовка пур шахтăсене те тенĕ пек çавăрса илнĕ.

Апрелĕн 29-мĕшĕнче Рузвельт Льюис патне çыру янă. Вăл çырура çапла каланă: хальхи условире забастовка вăл предпринимательсене хирĕç мар, чи малтан Америка правительствине хирĕç пырать, мĕншĕн тесен забастовка вăрçа тÿрременех чарса тăрать, тенĕ.

Рузвельта панă ответĕнче Льюис правительство органĕсем хирĕçĕве хутшăннине тÿсме пултараймастăп, тесе пĕлтернĕ.

Америкăри коммунистсен партин председателĕ Фостер Льюис позицине хытă сивленĕ. Америка халăхĕ вăрçăра тăрăшнă вăхăтра Льюис пораженилле позици тытса пырать, тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 1-мĕшĕнче Рузвельт топливо ыйтăвĕсен уполномоченнăйне, шалти ĕçсен министрне Икеса приказ панă. Вăл приказ тăрăх, Икесăн кăмрăк шахтисене пурне те контрольлесе тăмалла, вĕсене правительство ячĕпе тытса тăмалла.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). США-ра горняксен пĕрлешÿллĕ профсоюзĕ майăн 4-мĕшĕнчен пуçласа икĕ эрне ĕçлеме килĕшÿ тунă. Çав икĕ эрне хушшинче çĕнĕ килĕшÿ тăвасси çинчен калаçусем пымалла.

АНГЛИЯ СОВЕТ СОЮЗНЕ ТАВАРСЕМ ТĂРАТНИ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС): Рейтер агентстви Англи правительствин «пĕрлешÿллĕ королевствăн суту-илÿ обществи» ятлă суту-илÿ организацийĕ урлă Российăна Англирен вăрçăпа çыхăнса тăман материалсем яни çинчен пĕлтернĕ. Вăл таварсен хакĕ 150 миллион кĕренке стерлинга çитнĕ. Ку вăл 170 миллион стерлинглăх çар материалĕсем тăратнисĕр пуçне шутланать.

Кунта çакăн пек япаласем кĕреççĕ: электрооборудовани, станоксем, аллюминий, кобальт, хурçă, тăхлан, хура тăхлан, феррохром, феррохимиций, фосфор, цинк, промышленноçла алмаз, иридий т. ыт. те.

Çав общество урлă СССР-а пĕтĕмпе çĕршер пин тонна материалсем тăратнă, вăл шутра 82.000 тонна каучук тата 26.000 тоннăна яхăн тăхлан тăратнă. Çав материалсене паракан тĕп районсене — Малайăпа Голландри Индине — çухатнă пулин те, вăл материалсене çаплах ярса тăраççĕ. Халĕ Российăна Цейлонран пиншер тонна каучук яраççĕ, тăхлан тăратакансен хушшинче Англин чи ватă рудникĕсем пур. Российăна кирлĕ таварсене тăратас тĕлĕшпе обществăн йышлă çĕршывсенчен килекен тĕрлĕ материалсем нумай.

Тунисри вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ВОЙСКИСЕМ МАТЕРА ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС): Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Матера йышăнса илнĕ (Матер вăл Бизертăпа Тунис хушшинчи чугунçул çинче паллă пункт пулса тăрать).

Агитаторсене пулăшма

Нагляднăй агитаци

Ялхуçалăхĕнчи социализмлă ăмăртура Чăваш республики мала тухрĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш преми пачĕç. МТС-семпе колхозсен ĕçне Правительство пысăк хак пачĕ. Çак чыс пире малашне тата лайăхрах ĕçлеме хушать.

Социализмлă ăмăртăва малалла аталантарас ĕçре большевикла агитацин организаторла вырăнĕ çав тери пысăк. Вăл шутрах нагляднăй агитаци те паллă вырăн йышăнса тăрать. Большевикла агитацин пур майĕсемпе те усă курса, колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, заводсенчи рабочисемпе работницăсене—пурне те социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла, илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртмелле. Агитацин тĕрлĕ формисене ялхуçалăхĕнче те, промышленноçра та производствăллă ĕçсене пурнăçланипе çыхăнтарса пымалла.

„Пирĕн агитаципе пропаганда ĕçĕнче,— тесе çырнă ЦК ВКП(б) çумĕнчи агитаципе пропаганда Управленин начальникĕ Александров юлташ,—хăшпĕр работниксем часчасах çĕршыв умĕнче тăракан практикăллă задачăсенчен пăрăнаççĕ. Уйрăм организацисенче агитаци ĕçĕпе производство ĕçĕ— пĕр-пĕринпе çыхăнман икĕ тĕрлĕ ĕç пек пулса пыраççĕ. Паллах, çакăн пек агитаци тивĕçлĕ результатсем пама пултараймасть. Çакă вăл пропагандăпа агитаци ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать".

Çак сăмаха кашни агитаторăн, пропагандистăн, нагляднăй агитаци туса пыракан коммунистсемпе комсомолецсен асра тытса тăмалла. Пирĕн ĕçре нагляднăй агитацин тĕрлĕ формисемпе, тĕрлĕ меточĕсемпе усă курмалла. Агитаторсем кашни вулав çуртĕнче, колхоз правленинче, ялсовет çуртĕнче, заводсен цехĕсенче пĕр тăкаксăрах тĕрлĕ лозунгсемпе плакатсем çырса çыпăçтарма пултараççĕ.

Парти райкомĕсенчен чылайĕшĕ нагляднăй агитаци пысăк вырăн йышăннине тĕрĕс ăнланса илнĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра ку ĕç япăх мар. Завод территорийĕнче, цехсенче тĕрлĕ краскăсемпе çырнă лозунгсем, плакатсем, боевой листоксем, каррикатурăсем т. ыт. те курăнаççĕ. Вĕсем пурте ĕç нормине ирттерсе тултарма чĕнеççĕ.

Вагонсем тăвакан цехра çакăн пек плакат пур:

«Тăшманпа çапăçма пире Сталин чĕнет,
Тăван çĕршывра хĕрÿ ĕç вĕрет.
Ĕç нормисене виçшер хут тултарар,
Çапăçма кайнă пек, ĕç патне тухар!
Тылра савăнатăн герой-танкистпа,—
Фронтра вăл савăнтăр хăй те санпа!».

Плакатпа юнашарах стахановецсен ĕçне палăртакан хăма çакăнса тăрать.

Производство планĕсене ăнăçлăн тата ытлашшипех тултарассине цехсем, бригадăсем тата уйрăм рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарални татса парать. Цехсенче çакăнса тăракан лозунгсем лайăхрах ĕçлеме чĕнеççĕ:

«Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнар! Производство заданийĕсене пĕтĕмĕшпех тата ытлашшипех тултарар! Петрук машинистăн бригади аварисем тумасăр тухăçлă ĕçлет. Юлташсем! Петрук бригади пек тухăçлă ĕçлĕр»!

Нагляднăй агитаци ĕçĕ Шупашкар хулинче те чылаях лайăхланчĕ. Хулан тĕп урамĕсенче кашниех сапурсемпе çуртсен стенисем çинчи илемлĕ лозунгсене курма пулараççĕ. Вăл лозунгсем ĕçхалăхне нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешсе вĕсене аркатса тăкма чĕнеççĕ.

Колхозсенчи, МТС-сенчи агитаторсен халĕ вăрçă вăхăтĕнчи тухăçлă тырпулшăн кĕрешмелли обязательствăсене палăртакан лозунгсемпе плакатсем хатĕрлемелле. Вăл лозунгсемпе плакатсем çуракине кĕске вăхăтра тата ăнăçлăн ирттерме, кашни колхозника, машинно-тракторнăй станцинчи кашни работнике ĕç нормине ытлашшипех пурнăçлама чĕнмелле. Малта пыракан колхозниксен ĕçне кăтартакан, хĕрарăмсене, çамрăксене, колхозниксене лайăх ĕçлеме чĕнекен плакатсем çырса хатĕрлемелле.

Агитаторсен кашни кунах ĕççыннисене хамăр çĕршывра, отечественнăй вăрçă фрончĕсенче, ютçĕршывсенче пулса иртекен ĕçсемпе паллаштармалла. Çав шутпа Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене кашни кунах вуласа памалла, вăл пĕлтерÿсене радио тăрăх паниинченех çырса илме пулать. Çав пĕлтерÿсене агитаторсен тÿрех уя илсе тухса, канăш вăхăтра колхозниксене вуласа памалла. Халĕ Сталин юлташăн приказне тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Кусемсĕр пуçне хаçат витринисем туни питĕ усăллă. Çавăн пек витринăсем Шупашкарта, Улатăрта, Çĕмĕрлере тата ытти хăшпĕр вырăнсенче те пысăк вырăн йышăннă. Анчах Красноармейски, Элĕк районĕсенче вăл тивĕçлĕ вырăн йышăнайман-ха.

Хаçат витрини массăллă-политикăллă ĕçе чĕртсе яма нумай пулăшать. Çавăнпа та вăл витринăсене кашни вулав çуртĕнчех, колхоз правлени çуртĕнчех, кашни предприятирех тумалла. Чи лайăх агитаторсен витринăсем патĕнче дежурнăйсем пулса, хаçатра мĕн çырнине ăнлантарса памалла.

Хаçат витринисемсĕр пуçне юлашки пĕлтерÿсене алăпа çырса сарасси те паллă вырăн йышăнса тăрать. Ку тĕлĕшпе хăмасемпе усă курма пулать. Вăл хăмасем çине кĕске Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, Совет Союзĕнчи паллăрах ĕçсем çинчен, республикăри, районри, колхоз е предприяти пурнăçĕнчи паха ĕçсем çинчен çырмалла.

Уйрăм темăсем тăрăх хаçатсенчен касса илнĕ статьясен витринисене туни те питĕ усăллă. Сăмахран, „Отечественнăй вăрçă геройĕсем", „Фашизм хресченсемшĕн мĕн илсе килет", „Совет хĕрарăмĕ отечественнăй аслă вăрçăра" т. ыт. темăсемпе витринăсем тума пулать. Çавăн йышши витринăсем ВКП(б) райкомĕсен парткабинечĕсенче пур çĕрте те пур.

Библиотекăсемпе вулав çурчĕсенче фотоÿкерчĕксене тата хаçатсенчен касса илнĕ картинăсен куçса çÿрекен выставкисене тума пулать. Çав выставкăсене бригадăсене, цехсене çитермелле, вăл материалсем тăрăх агитатор кĕске калаçу туса ирттерме пултарать.

Колхозсенче, МТС-сенче, предприятисемпе цехсенче васкавлă хаçатсем, боевой листоксем кăларни те питĕ аван. Вăл йышши хаçатсенче палăрнă çитменлĕхсене тишкермелле, вĕсене пĕтерсе ĕçе лайăхлатма чĕнмелле. Тĕрлĕ кăтаргу хăмисемпе усă курса кашни колхозник, тракторист, рабочи, бригада, цех ĕçĕсене кăтартса памалла.

Кунта эпир нагляднăй агитацин хăшпĕр формисем çинче кăна чарăнса тăтăмăр. Нагляднăй агитацин ытти пур формисемпе те ĕçре усă курма тăрăшмалла.

Агитаторсемпе пропагандистсен, селькорсемпе рабкорсен пурин те ялхуçалăхĕнче промышленноçăн, транспортăн пĕтĕмĕшле задачисене тата хăйсен колхозĕсемпе предприятийĕсен пĕтĕмĕшле ĕçĕсене тĕплĕн пĕлсе тăмалла, агитаци ĕçне бригада, колхоз, цех, завод умĕнче тăракан [illegible] задачăсемпе çыхăнтарма пĕлмелле. Çавăн пек пулсан кăна нагляднăй агитаци сивĕч те оперативлă пулма пултарать.

Нагляднăй агитаци большевикла агитацин сивĕч меслечĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл пулăшнипе колхозсемпе МТС-сене, предприятисемпе артельсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн ялавне тата çĕнтерÿ [illegible] ĕçлеме пулăшар, халăхăн пĕтĕм вăйне нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах аркатса тăкас ĕçе мобилизацилер.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Маслопромăн Чăваш трестне трестра тата çу завочĕсенче ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: главнăй бухгалтер заместителĕ, финревизорсем, старши бухгалтерсем, сĕт промышленноçĕн технологĕсем.
Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, 2-мĕш Герцен урамĕ, 32. Главнăй бухгалтертан ыйтмалла. 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1329

Типография № 1. Управления полиг раф промышлениости при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.